Кун йĕркинче – симĕс ĕç çи ыйтăвĕсем

# Пулас тухăç пирки паян шутламалла

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**– Кунашкал условисенче ертӳçĕсемпе специалистсене, механизаторсемпе уй-хир ĕçченĕсене мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

– Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç пуçланать кăна-ха. Анчах ĕç-пуç кирлĕ пек йĕркеленсе каясси вырăнсенче епле çаврăнăçуллă пулнинчен килет. Çанталăк юсанасса çеç кĕтни çӳлтен йăтăнса анакан ырлăха кăна шанни пулмасть-и-ха? Кун пек чух уяр çанталăкăн кашни кунĕпе мар, кашни сехечĕпе туллин усă курмалла. Республика шайĕнчи симĕс ĕç çи кăтартăвĕсем те çакнах çирĕплетеççĕ. Кунта Муркашсем вăтам кăтартуран пĕчĕкрех пулни пире çанă таварарах ĕçлеме хистет.

Ĕçлес текен çын тĕрлĕ майсем шырать. Калăпăр, хальхи вăхăтра ялсенче уйрăм çынсен килĕсенче тĕрлĕ техника сахал мар. Икĕ енне те тивĕçтерекен килĕшӳсем турсан, выльăх апачĕ хатĕрленĕ çĕрте çав техникăпа та эффективлă усă курма майсем пур. Ĕçсене хăвăртлатас тесен усă курмаллах çак меллe.

Çанталăк условийĕсене кура, уйрăм хуçалăхсенче чи малтанах çулнă курăксенчен сенажпа силос хывасси çине тимлĕх ытларах уйăрма тивет, тесшĕн эпĕ. Типĕ утта вара лайăх çанталăкра е курăксене иккĕмĕш хут çулса илнĕ хыççăн хатĕрлес çулйĕре те суйласа илме пулать. Çут çанталăкăн кашни вылявнех йышăнма пĕлмелле.

Çакна та каласа хăвармалла, хуçалăхсенче выльăх апачĕ хатĕрленĕ тапхăрта пурлăхпа тата натурăпа хавхалантармалли мерăсене çĕнĕрен пăхса тухса çирĕплетмелле. Çак çул выльăх апачĕ хатĕрленĕ чух унăн калăпăшĕ çине çеç мар, пахалăхĕ çине те кирлĕ пек çаврăнса пăхма пулăшасси пирки иккĕленӳ çук.

**– Апат хатĕрленĕ çĕрти çĕнĕлĕхсем терĕр те вĕсем пирки тĕплĕнрех чарăнса тăма çук-ши?**

– Малалла пăхакансем тăрăшсах çĕнĕ технологисемпе çыхăну тытаççĕ. Кун пек мал туртăмлă улшăнусем, çĕнĕлĕхсем выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре те пур. Акă, иртнĕ çул «Ударник» тата «Герой» хуçалăхсем силос хатĕрленĕ çĕрте Кальци пропионачĕ консервантпа усă курчĕç, çак меллe пĕрер пин тонна силос янтăларĕç. Хĕл каçа çак апатăн усси курăнчĕ. Апат пăсăлмасть, тутлăлăхне çухатмасть, хĕл сиввинче шăнса лармасть, перекетлĕхе ӳстерет. Çапла вара йывăр силосланакан пăрçа йышши культурăсенчен (пăрçа, клевер, люцерна) силос хывнă чух асăннă консервантпа усă курмаллах. Пĕлтĕр хуçалăхсем çак ĕçре закваскăпа ытларах усă курнăччĕ пулсан, кăçал вĕсем консерванта малти вырăна тăратрĕç. Ăна ку таранччен Е. Андреев яч. хис., «Восток», «Герой», Ильич яч. хис., Ленин яч. хис., «Оринино», «Свобода» хуçалăхсем илнĕччĕ пулсан, çак кунсенче «Ударник», «Передовик», Суворов яч. хис., Чапаев яч. хис. хуçалăхсем илме пăхаççĕ. Вулакансене пĕлме çакна та каласа хăварас килет. 200 килограмм консервант пĕр пин тонна силос хывма çитет. Консерванта силос хывнă чух сийĕнсийĕн хурса пыни апатри тутлăлăх хатĕрĕсене сыхласа хăварма пулăшать.

Силоса курăка тӳрремĕн çулса хывмалла пулсан, сенаж хатĕрленĕ чух çулнă курăка траншейăна хуриччен 60 процент чухлĕ кушăхтармалла. Сенаж-силос яммисене 4-5 кунта хупасси пирки те манса каймалла мар. Вĕсене çак кунсенче лайăх пусăрăнтарса тăмалла.

Утă хатĕрленĕ чух ăна фермăсем çывăхне хурасси пирки манмалла мар. Хĕлле вĕсене фермăна турттарса хушма тăкак тӳсессинчен паянах асăрханар.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Çут çанталăк тата эпир

# Тавралăха упрасси – пĕрлехи тивĕç

Эпир хамăр та çут çанталăкăн пĕр пайĕ пулнăран пире хупăрлакан тавралăх вăл пирĕн кил тесен те пысăк йăнăш пулас çук. Хамăр киле, пурсăмăр та пĕрле пурăнакан вырăна эпир тирпейлĕ тытмасан кам ун çине хуçалла çаврăнса пăхĕ-ха? Никам та! Çак çитменлĕхе пĕтересси вара пирĕн тĕп тĕллев.

Пытармастăп, çут çанталăк илемĕпе килленмен çын çук та пулĕ çакă çутă тĕнчере! Унăн илемĕпе, пуянлăхĕпе кашниех куллен усă куратпăр: хĕл каçма вутă-шанкă хатĕрлетпĕр, тырă-пулă тата пахча çимĕç ӳстеретпĕр, çырла-кăмпа пуçтаратпăр, сиплĕ курăксем татса чей вĕретсе ĕçетпĕр т. ыт. те. Асăрханă-и, йывăççăр пĕр строительство объекчĕ те çӳлелле кармашаймасть. Анчах эпир ăна упрама, сыхлама, тивĕçлипе хакласа малалла аталантарма манса пыратпăр мар-и? Вăрмансене шелсĕр касса пĕтерсе пыратпăр. Шывсене пĕр шелсĕр варалампăр, чĕрчунсене сунарта пĕтеретпĕр... Мĕншĕн?! Мĕнле пăхăпăр ыран эпир хамăр ачамăрсен куçĕнчен? Çут çанталăк мĕншĕн чухăн тесен мĕнле хурав парăпăр? Ăçта никĕсленет-ха эпир хамăр çурт çине тăшманла пăхасси? Манăн кунта хамăн хурав. Инкекĕн сăлтавĕ – çынсем паянхи кунпа çеç пурăннинче. Чылайăшĕ алла пуртă тытса вăрмана кайнă чух ачисемпе мăнукĕсен пуласлăхĕ пирки шутламасть. Ан тив, хăйĕн пурăнса пултăр! Çаплах пулмалла-ши?..

Çĕршывра çут çанталăка сыхлама ятарлă пĕлӳ илнисем те, тĕрлĕ шайри пуçлăхсем те (пурте мар, паллах)



тăван тавралăха ăшă кабинетсенчи çемçе пукансем çинче ларсах «юратма», «упрама» вĕрентсе пыни сисĕнет. Вĕсен çăмăл автомашинисем те вăл е ку çитменлĕхе курса асфальт сарнă çул çинчен улăх-çарана, çырмана, вăрмана пăрăнма «хăраççĕ». Ара, май килмесен унта лакса ларма, урасене варалама тивет-çке! Çуран çӳрен ырă çынсен хĕрӳ сăмахĕсене те, тен, илтес килмест пуль. Мĕншĕн тесен вăл сăмахсенче – çитменлĕхсем пирки тӳрремĕнех калани, питлени, хăйсен тивĕçĕсене тӳрремĕнех пурнăçлама ыйтни. Çак хумхануллă вăхăтра вĕсем çут çанталăкăн чăтăмлăхĕ те вĕçĕмсĕр маррине систереççĕ. Анчах тутă хырăмли выççине тус марах çав...

Пирĕн район сăн-пичĕ те ырă енне улшăнсах пырать. Ку паллах савăнтарать, анчах... Çав анчах шухăшлаттарать те паян мана. Пĕр çĕрте илемленетпĕр, тепĕр çĕрте вараланса пыратпăр. Пĕр çĕрте çут çанталăка сыхлатпăр, тепĕр çĕрте – таптатпăр, юханшывсене фермăсенчен выльăх-чĕрлĕх каяшĕ юхса тухнине курмăш пулатпăр, вăрмансене йăлари тĕрлĕ ăпăр-тапăрпа тултаратпăр-пуянлататпăр. Тĕслĕх вырăнне «Свобода» хуçалăхăн Кашмашри ферма вăрманĕ (çапла ят панă ăна кунта пурăнакансем) тасамарлăхсен айне пуласси куç умĕнчех. Мĕн кăна килсе тăкмаççĕ пуль унта! Çакăн пирки районти тĕрлĕ шайри пуçлăхсене хăлхаранах систерни те усă памарĕ паянхи куна илсен. Çапла пулмалла-ши?! Ку çулпа кайсан асăннă вăрман пĕтесси те куç умĕнчех. Вăрмана сыхласах хăварасчĕ пулас ăрусем валли! Район çыннисем, чарăнăр çут çанталăкран мăшкăлламa! Хамăра хамăр пĕтеретпĕр вĕт кун пек хăтланса! Пуçлăхсем, куçусене уçăр, хăлхусене тăратăр! Курăр – çут çанталăк сирĕнтен пулăшу ыйтать. Уçă сывлăшпа сывлама, кайăк-кĕшĕк юррине итлеме, çăл куççен тăрă шывне ĕçме пĕр-пĕр ырă кун пĕрле пухăнса çуранах утса тухсамăр район уй-хирĕсемпе вăрман-çаранĕсем тăрăх! Çут çанталăкăн суранĕсене асăрхаса вĕсене сиплеме пĕрле шăкăл-шăкăл калаçса тивĕçлĕ йышăнусем тусамăр! Уншăн сире пурсăра та çут тĕнче хăйĕн вăй-халне парĕ, варкăш çилĕпе çанçурăмран ачашласа тав тăвĕ. Çĕр çыннисем те сире сума сăвĕç кăна.

**Игорь МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.

Ял çыннисене пĕлме

# Эмел курăкĕ – сывлăх çăл куçĕ

Çу кунĕсем тăраççĕ. Кашни чĕрĕ чуншăнах ытармалла мар илемлĕ вăхăт. Çак меллĕ вăхăтпа тата çу илемĕпе туллин усă курса юлма пĕлсен...

Çу кунĕсем эмел курăкĕ пухмалли чи меллĕ вăхăт. Вĕсене фармацевтика промышленнăçĕ чăтăмсăр кĕтет. Эмел курăкĕ пухни сывлăхшăн усăллине пĕлсе тăнă вăхăтрах вăл ĕç çемье бюджечĕшĕн те пысăк тĕкĕ пулма пултарать. Çакна çулленхи практика çирĕплетсе парать. Акă иртнĕ çулхи çу кунĕсенче Элĕк районĕнчи 10-мĕш класра вĕренекен А. Багрова 2100 кг эмел курăкĕ пухса çемье бюджетне 44 пин тенкĕлĕх ӳстерчĕ. Çак районти Георгий Давыдов иртнĕ çу кунĕсенче 14 пин тенкĕлĕх эмел курăкĕ пуçтарчĕ. Хĕрлĕ Чутайĕнчи вăтам шкулти Лилия Герасимова – 9 пин текĕлĕх.

Эмел пуçтарасси кăçал та малалла пырать. Эмел курăкĕсен хакĕ кăçал 50-250 процент пысăкрах. Çак çула суйласа илекенсем валли эмел курăкĕсен хакĕсем пирки тата эмел курăкĕсене епле пухмалли çинчен пĕлтеретпĕр.

Эмел курăкĕ пухнă чух çак правилăсене асра тытмалла: чечексене ӳсен-тăран чечеке ларнă вăхăтра пухмалла, çимĕççене – пиççе çитсен, тымарсене – çимĕççем пулса çитсен кĕркунне е çуркунне иртерех. Тымарсене кĕреçепе кăлармалла та шывпа çуса тасатмалла, пысăккисене урлă-пирлĕ касса типĕтмелле пулсан, пĕчĕккисене аплипех.

Курăксене çĕр çумĕнчи пайĕсене хăварса касса илмелле.

| Курăксен ячĕсем | Чĕрĕлле (тенкĕпе) | Типĕтнĕ хак (тенкĕпе) |
|---|---|---|
| Хурăн çулçисем | 3 тенкĕ те 50 пус | 22 тенкĕ |
| Чей курăкĕ | 3 тенкĕ те 50 пус | 28 тенкĕ |
| Календула | 9 тенкĕ | 75 тенкĕ |
| Вĕлтĕрен çулçи | 3 тенкĕ | 22 тенкĕ |
| Çăка чечекĕ | 20 тенкĕ | 150 тенкĕ |
| Шапа хупаххи | 5 тенкĕ | 44 тенкĕ |
| Пилеш курăкĕ | 3 тенкĕ | 23 тенкĕ |
| Чĕкеç курăкĕ | 5 тенкĕ | 40 тенкĕ |
| Чăрăштăрри | 3 тенкĕ те 50 пус | 28 тенкĕ |
| Армути | 2 тенкĕ | 20 тенкĕ |
| Чĕре курăкĕ | 2 тенкĕ | 15 тенкĕ |
| Сысна курăкĕ | 3 тенкĕ | 24 тенкĕ |
| Мулкач курăкĕ | 2 тенкĕ те 50 пус | 18 тенкĕ |
| Шурлăх туни | 8 тенкĕ | 50 тенкĕ |
| Шăши тикенекĕ | 3 тенкĕ те 50 пус | 30 тенкĕ |
| Шĕпĕн курăкĕ | 3 тенкĕ | 30 тенкĕ |
| Кĕтӳç хутаççи | 3 тенкĕ | 23 тенкĕ |

Кăклама юрамасть.

Эмел курăкĕсене, тымарсемсĕр пуçне, уяр та типĕ çанталăкра пухмалла.

Хаксем пирки тĕплĕнрех райпо магазинĕсенче ыйтса пĕлме пулать. Çĕнтерӳçĕсене хаклă парнесем кĕтеççĕ.

**Е. СЕМЕНОВА,**
**Муркаш райповĕн хатĕрлев пайĕн ертӳçи.**

Социаллă хӳтлĕх ыйтăвĕсемпе

# «Ача укçи» ӳсрĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**– Енчен те çемьери кашни çын пуçне лекекен вăтам тупăш Чăваш Республикинче йышăннă пурăнмалли чи пĕчĕк минимумран иртсен, «ача укçи» тухмасть-и?**

– Тухать, анчах та пурин те мар. Енчен те çемьере 18 çула çитмен пĕр е икĕ ача пулсан, уйăхсерен ачашăн паракан пособие 2 çула çитмен ачасемшĕн çеç параççĕ. Тулли мар çемьесенче те, ытти категорири çемьесенче те 234 тенкĕпе танлашать вăл. Ку çемьесенчи аслăрах ачасемшĕн пособи тухмасть.

Çемьере 18 çула çитмен 3 ача пулсан, уйăхсерен ачашăн паракан пособи 2 çула çитмен ачасемшĕн тулли мар çемьесенчи ачасемшĕн 549 тенкĕ пулать, ытти категорисенчи çемьесенче – 293 тенкĕ. 2 çултан пуçласа 7 çулчченхи ачасемшĕн вара пособи тулли мар çемьесене çак ӳсĕмри кашни ачашăн 315 тенкĕ, ытти категорисенчи çемьесене 59 тенкĕ тухать. 7 çултан аслăрах, 18 çул тултарайман ачасемшĕн вара пособи тулли мар çемьесенче 665 тенкĕпе, ытти категорисенчи çемьесенче 130 тенкĕпе танлашать.

Енчен те çемьере 18 çула çитмен 4 е ытларах ача пулсан, пособи виçисем çакăн пек: 2 çул тултарайман ачашăн тулли мар çемьесенче те, ытти категорири çемьесенче те 549 тенкĕ илĕç. 2 çултан пуçласа 7 çулчченхи ачасемшĕн пур категорири çемьесенче те 315 тенкĕ, 7 çултан пуçласа 18 çула çитиччченхи ачасемшĕн 665 тенкĕ илеççĕ.

**– Нина Пантелеевна, çак çĕнĕлĕх опекунсемпе ачана çемьене пурăнма илнĕ ашшĕ-амăшĕсене пырса тивет-и?**

– Саккунра ку енпе те улшăну кĕртнĕ. 2 çула çитмен ачана опекăна е çемьене пурăнма илсен, уйăхсерен паракан пособи пĕр ачашăн 4340 тенкĕ тухать, 2 çултан пуçласа 7 çула çитиччченхи ачасемшĕн – 4514 тенкĕ, 7 çултан иртнĕ, 18 çул тултарайман ачасемшĕн – 4938 тенкĕ.

**– Хăш уйăхран пуçласа çĕнĕ виçепе тӳлеме пуçлаççĕ ачашăн паракан пособие?**

– Çакăнта калаçнă пособисене çĕнĕ виçесемпе апрель уйăхĕнчен пуçласа шутласа параççĕ.

**– Нина Пантелеевна, Сире хаçат вулакансен ячĕпе тав тăватăп ăнланмалла калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Ыйту – хурав

# Пăлханма сăлтав çук

(Вĕçĕ. Пуçл. 2-мĕш стр.).

Раççейре пайăркасем сарăлассин чи пысăк виçине (плотность потока энергии) кĕсье телефонĕсем валли 0,1 мВт/тăв. см., сотовăй база станцийĕсем валли 0,01 мВт/тăв. см. чухлĕ палăртнă. Кунта çакна та шута илес пулать. База станцийĕ вĕçĕм ĕçлет, кĕсье телефонĕпе вара вăхăтран вăхăта кăна усă куратпăр. Тĕрĕслев органĕсем сиенлĕ витĕм шайне тĕрĕслесех тăраççĕ.

Çапла вара хăш-пĕр массăллă информаци хатĕрĕсем çынсем хушшинче тĕрлĕрен пăлхану çуратасшăн пулин те, наука тĕпчевĕсем пачах урăххине çирĕплетеççĕ: пысăк частоталлă пайăркасем саракан устройствăсем нормăсене пăхăнса ĕçлеççĕ. Wi-Fi тата Bluetooth устройствăсем пурте тенĕ пекех, кунпа пĕрлех мобильнăй çыхăнăвăн база станцийĕсем те, DEST-сем пур çирĕп требованисене те тивĕçтереççĕ. Çапах та пысăк частоталлă пайăркасем çын сывлăхĕшĕн пачах хăрушă мар тесе калама пулмасть. Çавăнпа хаçат вулакансене хăш-пĕр сĕнӳсем панă пулăттăм. Вĕсем сире пысăк частоталлă пайăркасем витĕм кӳрессинчен сыхланма май парĕç.

## Кĕсье телефонĕсем пайăркасем сарасси

1. Япăх илтĕннĕ чухне калаçма ан тăрăшăр. Кун пек чухне телефон тулли хăватпа ĕçлат. Нумай ан калаçăр. Ытларах SMS-хыпарсем яма тăрăшăр. Пĕр енчен пайăркасем сарăлассин тапхăрĕ кĕске, тепĕр енчен пуç ыратаси çине витĕм кӳмест. Машинăра пачах калаçмалла мар. Автомашина рами пайăркасене каялла тапса ярать, унăн хăвачĕ ӳсет. Кунсăр пуçне сирĕн кĕсье телефонĕн хăватлăрах сигнал яма тивет. Гарнитурăпа усă курăр: Bluetooth та пайăркасем сарăлассин хăватне чылай чакарать. Телефон туяннă чухне те тимлĕрех пулмалла: пайăркасем сарасси Европа стандарчĕсене тивĕçтертĕр.

2. Сертификациллĕ аппаратсем кăна туянăр. Ку вăл сирĕншĕн кăна мар, ытти çынсен сывлăхĕшĕн те пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

## DEST телефонĕсем (радиотелефонсем) пайăркасем сарасси

База станцине пурăнмалли çуртран аяккарах вырнаçтарăр. Вăл калаçман чухне те пайăркасем сарать. Çĕнĕ телефон модельне туяннă чухне вара трубкăна çĕклемен чухне вăл сӳнекеннине туянма тăрăшăр.

## Wi-Fi пайăркасем сарăлассi

Унпа усă курман чухне эсир унта кĕме май пуррине сӳнтерĕр. Кун пек тума май килмест пулсан вара пайăркасем сарассин хăватне чакарма май паракан устройствăсем суйласа илме тăрăшăр.

## Микрохумлă кăмакасем пайăркасем сарасси

Апат-çимĕç хунă чашăк çаврăнса тăнине пăхса тăма ан тăрăшăр. Эсир мĕн чухлĕ кăмакаран катарах пулатăр, сирĕн сывлăхшăн çавăн чухлĕ лайăхрах.

## Телевизор пайăркасем сарасси

Дистанцие пăхăнăр. Телевизора çывăхран пăхни куç курассине япăхлатать кăна мар, организм пайăркасем йышăнассине те ӳстерет.